Аслăлăх çыннисем

КАНĂÇА ПЁЛМЕН ФЕИЗОВ

ЭРНЕ пуçламăшĕнчех ĕçе ĕрӳллĕн тытăнса каясси Чăваш патшалăх университечĕн философипе аслăлăх меслечĕсен кафедрин пуçлăхĕн Энвер Зиатдинович Феизов профессорăн йăлине тахçанах çирĕп кĕрсе вырнаçнă. Паян та ир кӳлĕм преподавательсемпе кафедрăра тĕл пулса канашланă хыççăн вăл университетăн йышлă факультетĕсенчен пĕринче аслă шкул пĕтернĕ хыççăн философи енĕпе аспирантурăра вĕренес шухăш тытнă студентсемпе курса каласрĕ. Кăнтăрла çитес умĕн аспирантсемпе консультаци ирттермелле пулчĕ. Ун хыççăн уйăхра пĕрре пулакан философи семинарĕн черетлĕ ларăвне хатĕрленесси пирки физика, математика тата химии факультечĕсенчи ăсчахсемпе каласса татăлчĕ.

Çамрăк çын мар ĕнтĕ халь тин Энвер Зиатдинович, кăçалхи ака уйăхĕн вĕçĕнче 80 çул тултарчĕ. Çапах та иртсе пыракан ĕмĕрĕн лавĕ йывăрланса çитнине туймасть-ха. Кун йĕркине çирĕп пăхăнни те канăça пĕлмесĕр ĕçлеме пулăшать пулмалла Феизова. Акă халĕ те вăл пушă вăхăтпа усă курса университетăн тĕп корпусĕн /философи кафедри çавăнта, иккĕмĕш хутра вырнаçнă/ тротуарĕсемпе çур сехет ытла уçăлса çӳрерĕ. Тавралăха каç чаршавĕ хуплана хыççăн та киле таврăнма васкамарĕ-ха, икĕ сехете яхăн çĕнĕрен пуçланă монографие çырса ларчĕ. Каçхине ĕç хыççăн троллейбусран хăйĕн çурчĕ патне çитиччен чылай малтан анса çуран таврăнма юратать вăл. Кашни кунах ерипен, васкамасăр утса тухать икĕ çухрăмран кая мар çула. Çанталăк начаррипе лайăххине те пăхса тăмасть. Пуç канать, ӳт-пӳ çăмăлланать, кăмăл лайăхланать-çке-ха çуран çӳресен. Иртсе пыран кун-çул, ачалăх, çамрăклăх тухса тăрать куç умне ун пек чухне.

Чăваш Республикин кăнтăр енче, çеçен хирпе Сăр вăрманĕн тăсăмĕ пĕрлешнĕ çĕрте, темĕн пысăкăш тутар ялĕ Шăнкăртам сарăлса ларать. Шăпах çак ялта çуралса ӳснĕ те ĕнтĕ Энвер Зиатдинович Феизов. Иртнĕ ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсен вĕçĕнчи Шăнкăртама, паллах, хальхи Шăнкăртампа танлаштарма май çук. Вăл вăхăтра çак пысăк ялта тĕпрен илсен улăм тата хăма витнĕ пысăк мар çуртсем урамĕ-урамĕпе ларнă. Мишер çынни суту-илӳ тума юратать. Анчах пурте сутуça тухсан тавар туянаканĕ кам пулĕ? Мишерсем те нумайăшĕ çĕр ĕçлесе тырă туса илнĕ, унпа тăранса пуранна. Тутар пичче выльăх усранă, каскалама маçтăр пулнă. Пурте атă тăхăнĕччĕç те, ăна туянма укçа кирлĕ. Укçа çичĕ чул айĕнче выртать. Тутар майрисем тĕпне сăран çĕленĕ çăм калуша кăмăллана, упăшкисем чăвашсем пекех çăпата сырнă. Энвер ашшĕ, Феиз ывăлĕ Зиатдин, ялта хутла лайăх пĕлекен çын шутланнă. Вăл араб çырулăхне те, кириллицăна та аван пĕлнĕ. Килĕнче унăн самаях пысăк арчара тутарла пичетленĕ кĕнекесем упраннă.

Октябрь революцийĕпе граждан вăрçи хыççăн пур çĕрте те ял канашĕсем йĕркеленеççĕ. Хутла маçтăр пĕлнине кура Зиатдина ял канашĕн çыруçине суйлаççĕ. Çĕнĕ пурнăç тăвас мехелпе мĕн кăна хăтланман пуль ун чухне! Вăтăрмĕш çулсен варринелле Мускав хистенипе Чăваш Республикинче тутар районĕ туса хураççĕ. Райцентр ăçта пулмалла. Ăçта тутар нумай, çавăнта пулмалла! Шăнкăртам тутар районĕн центрĕ пулса тăрать. Района хальхи Патăрьел, Комсомольски, Елчĕк, Шăмăршă хутлăхĕнчи тутар ялĕсене кĕртеççĕ. Çĕнĕ районти халăх йышĕ – çирĕм пин çынна яхăн. Район пур пулсан унăн пуçлăхĕ те пулмалла. Компарти енчен ертсе пыракан пур, райĕçтăвком пуçлăхĕ те кирлĕ-çке-ха. Çак ĕçе Зиатдин Феизович Феизов пултармалла, ял канаш çыруçинче вунă çула яхăн ĕçленĕ. Шупашкар хирĕç мар, Феизова райĕçтăвком председательне суйласа лартаççĕ. Пуçланса каять вара ĕç. Районти вун-вун кантур валли çурт-йĕр кирлĕ. Учрежденисем валли уйрăм çынсем патĕнче хваттерсем шыраса хăшкăлмалла. Шăнкăртам районĕн çĕрĕсем пĕр кăшăлта мар. Каçал тăрăхĕнчи Тукай Мишерĕнчи колхоза çитме лашана вăтăр çухрăм ют район çĕрĕсем урлă чуптармалла. Елчĕк хутлăхĕнчи Сăрьелне çитме тата та инçерех. Тăватă-пилĕк çул хушшинче чылай шараçланмалла пулать Зиатдин Феизович Феизовăн.

• Э.З.ФЕИЗОВ СТУДЕНТСЕМПЕ.

Чăвашра наци районĕ йĕркелени ăнăçлă пулса тухаймасть. Реформăсен «чирĕпе» аптăранă Чăваш Ен пуçлăхĕсем тата та пысăкрах улшăнусем тума плансем хатĕрлеççĕ. 1939 çул çитсе тăрать. РСФСР халăх комиссарĕсен йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн авалхи Шăнкăртама урăх ят параççĕ – Чкаловски ялĕ теме пуçлаççĕ. Патăрьел районне пĕтерсе район цетрне Аслă Каçала куçараççĕ. Унччен Шăнкăртам районне кĕнĕ тутар ялĕсем те, йĕри-таврари чăваш ялĕсем те административлă майпа Чкаловски районне пăхăнса тăма пуçлаççĕ. Чкаловскинчен çирĕм çухрăм аякри Аслă Каçал та ятне улăштарать, Комсомольски ялĕ тата çав ятлă райцентр пулса тăрать. Чкаловски районне ертсе пыма çĕнĕ пуçлăхсем уйăрса лартаççĕ. Зиатдин Феизович урăхран райĕçтăвком председателĕнче ĕçлес темест, вăл райпромкомбинат пуçлăхĕ пулса тăрать.

Энвер ун чухне вуннă тултарса вун пĕре пуснă кăна-ха. Вăл вăхăтсене халĕ те лайăх ас тăвать. Уйрăмах çуллахи кунсем унăн куçĕ умне сăрланă ӳкерчĕксем пек тухса тăраççĕ.

Килте вĕсем виççĕн çеç: ашшĕ, амăшĕ тата Энвер. Зиатдинпа Захибăн аслă ывăлĕпе хĕрĕ пĕчĕклех вилнĕ. Амăшĕ кĕçĕн ывăлне чир-чĕртен, урамра инкек курасран куç пек сыхлать пулсан та ăна ĕç хушмасăр тăма пултараймасть. Хăйĕн колхоза тухмалла, выльăх-чĕрлĕх пăхмалла, апат пĕçермелле, кĕпе-йĕм çумалла – сахал-и ăнакăна тумалли хуçалăхра. Ашшĕ килте сайра пулать. Пахчара çум çумласси, йăрансене кăпкалатасси, шăварасси пĕтĕмпех Энвер çинче. Урамра тантăшĕсемпе выляна май пахча ĕçĕ пирки тăнчах манса кайни те пулать арçын ачан. Çапах та вăйăа пăрахсах таврăнмалла, пахчана тухмаллах Энверĕн. Ашшĕн куçĕнче ӳкес, унран сивĕ сăмах илтес килмест малайăн. Виçĕм кун çеç-ха ашшĕ Энвере ирхине илĕм-тилĕмпех вăратрĕ. Çывăрас килет, куç уçăлмасть. Ашшĕпе иккĕш пахчана йăрансем патне тухрĕç. Çум та пусса илнĕ, шăварман та вĕсене. Юрать-ха сывлăм ӳкнĕ те, пахча çимĕç калчисем йĕп-йĕпех. Ашшĕ паян мĕн-мĕн тумаллине кăтартса хăварчĕ, сывлăм типичченех ĕçе пуçăнма хистерĕ. Эх-х, ашшĕ те çав! Яланах çынсенчен ăслăрах пуласшăн. Тутарсем пахча çимĕçпе айкашмаççĕ-çке-ха. Ава, ялти вулав çуртĕнчен те кĕнеке илсе тăма çырăнчĕ. Ăçта пăхсан та – тутарсемпе чăвашсен ялĕсем. Чкаловскинче ава шăкăрин тутар. Патăрьелĕнче чăвашсем пурăнаççĕ. Энверĕн ашшĕ-амăшĕн Тутар Тимешĕнче, Пикшикре, Ыхра Çырминче тăванĕсем, пĕлĕшĕсем пур. Землиханов учитель ава пирĕн çĕршывра тĕп халăх вырăс халăхĕ тет. Районти учрежденисенче вырăссем курăнкалаççĕ-ха, ялти тимĕрçĕ те вырăс, шкулта аслă классене географи вĕрентекен Софья Марковна та вырăс хĕрарăмĕ. Ăçта вара ыттисем? Ăçтан нумай пулччăр-ха ĕнтĕ вĕсем. Землиханов учитель Чăваш тата Тутар Республикисем Совет Союзĕн пĕр пĕчĕк пайĕ пек çеç шутланса тăраççĕ, йĕри-таврашри Ульяновск, Куйбышев, Горький, Саратов тата ытти вун-вун облаçпа крайра вырăссем ытларах пурăнаççĕ тесе ăнлантарать. «Кам та кам вĕренсе тĕнчене тухас тет, çавăн вырăс чĕлхине тăрăшсах вĕренмелле, ăна лайăх пĕлмелле», – пĕр вĕçĕмсĕр çапла сăмахлать Землиханов учитель. Энвер виççĕмĕш класа куçнă хыççăн ашшĕ те çав юррах юрла пуçларĕ.

Ялти вулав çуртĕнче вырăсла кĕнекесем тутарлинчен те нумайрах-мĕн. Ачапăча валли кăларнисем те пур. Ача Александр Пушкинăн сăввисене, Лев Толстойăн калавĕсене, Иван Крыловăн юптарăвĕсене кăмăлларĕ. Сăввисем янравлă, çепĕç. Калавĕсем тарăн шухăшлă. Юптарăвĕсем этемĕн кăмăл-шухăшне уçса параççĕ. Çивĕч ăс-тăнлă арçын ача вырăсла вулама хăвăрт хăнăхрĕ, текстсене ăнланакан пулса çитрĕ.

Çапла çул хыççăн çул иртрĕ. Чкаловски ялĕ район центрĕн шутĕнче пулсан та ытти ялтан пысăкăшĕпе çеç уйрăлса тăратчĕ. Мĕнпур çĕрти пекех йывăç çуртсем, шăтăк-путăклă çул-йĕр, тусанлă тăкăрлăксем, тĕп урамри виçĕ-тăватă лавкка, киленкаян лавĕсем çинчи утă-улăма çиме вĕреннĕ ĕнесемпе качакасен ушкăнĕ. Энвер çиччĕмĕш класа куçсан çапах та райцентрта вăтам шкул уçрĕç. Çамрăк çиччĕмĕш класа питĕ лайăх паллăсемпе пĕтерчĕ, ăна Мухтав грамоти пачĕç.

Виççĕмĕш çул хаяр вăрçă пыратчĕ ĕнтĕ. Аллăсене çывхарса пыракан Зиатдин Феизович, яваплă вырăнсенче пĕр канмасăр вун-вун çул ĕçлекенскер, вăрçă вăхăтĕнче сасартăк чирлесе ӳкрĕ, вилĕме çĕнтерессе çĕнтерчĕ, анчах питĕ вăраххăн сывалса пычĕ. Вун пиллĕкри Энвер çине килти ĕçсем те, хирти ĕçсем те тиенчĕç. Çав çул вăл çăвĕпех МТС тракторисчĕпе пĕрле уй-хирте суха турĕ, плугарьте ĕçлерĕ.

Энвер кĕркунне вăтам шкулăн саккăрмĕш класне каймалла пуль тесе шухăш тытнăччĕ, ашшĕ ăна урăхла ăс пачĕ. «Хăвăртрах ура çине тăма тăрăшмалла, ывăлăм. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă çĕре эсĕ вун саккăрта пулатăн. Вуннă вĕренни специальноç памасть. Патăрьелĕнче педучилище пур. Унта сана экзаменсăрах илеççĕ. Виçĕ çултан учитель пулса тухатăн. Вĕçтер çавăнта», – терĕ.

Педучилищĕне Энвер пĕр чăрмавсăрах кĕчĕ. Хальхи вăхăтра Шăнкăртампа Патăрьелне аслă çул çеç уйăрса тăрать. Икĕ енчете çуртсем çул еннелле çывхарăсах пыраççĕ. Кăçал кĕркунне Энвер Зиатдинович Патăрьелĕнчи педагогика училищине вĕренме кĕнĕренпе 65 çул çитет. Ун чухне çак икĕ пысăк ял хушши чылай инçетреччĕ çав. Феизовсен килĕнчен училищĕне çитме шăпах çичĕ çухрăм утмаллаччĕ. Интернат-общежити таврашĕ тивĕçмен. Кун кĕске чухне, хĕллехи вăхăтра, хваттере кĕрсе пурăнни те пулнă. Педучилищĕре вĕренни Энвершăн питĕ те усса пычĕ, унăн малашнехи пурнăç çулне палăртса хучĕ. Училищĕне çывăхран та, утмăл-çитмĕл çухрăмри ялсенчен те чăваш, тутар, вырăс ачисемпе хĕрĕсем çӳретчĕç. Предметсене çуррине ытла вырăсла вĕрентетчĕç. Пултарулла çамрăк виçĕ çул хушшинче вырăсла та, чăвашла та маттур калаçакан пулса тăчĕ. Пур енĕпе те лайăх ĕлкĕрсе пычĕ вăл, çапах та педагогика, логика, психологи предмечĕсем ăна ытларах кăсăклантарчĕç.

Ашшĕн сывлăхĕ ерипен мая кайрĕ, анчах та çӳлтисем темиçе хутчен сĕнсен те урăхран вăл ертсе пымалли ĕçе кĕме килĕшмерĕ.

Энвер Феизов иккĕмĕш курсран вĕренсе тухас умĕн вăрçă та чарăнчĕ. Çĕнтерӳçĕ-салтаксем килĕсене таврăнчĕç.

Вăрçă вĕçленнĕ хыççăн тепĕр çулталăкран Энвер педучилищĕрен вĕренсе тухрĕ. Ялти шкулта ĕçлеме пуçламалла-и е малалла вĕренмелле-и? Педучилище пĕтернĕ çамрăк хальхинче кил пуçĕ канаш парасса кĕтмерĕ, ăсĕнче тахçанах çуралнă шухăшне пĕлтерме хăюлăх çитерчĕ.

– Хусанти педагогика институтне каятăп, атте. Педагогикăпа психологи факультетне кĕрес тетĕп. Унта педучилищĕсенче ĕçлеме преподавательсем хатĕрлеççĕ. Тăватă çул вĕренмелле. Стипенди параççĕ. Хусан аслă, баржăсене тиеме те, вакунсене пушатма та вăй пур-ха. Аллах пулăшсан, тен, Патăрьелнех ĕçлеме таврăнăп, – çапла пулчĕ Энверĕн сăмахĕ.

Ывăлĕн шухăшне ашшĕ ырларĕ, лайăх вĕренме, яланах йĕркеллĕ пулма ăс парса ăсатрĕ. Пĕртен-пĕр юратнă ачине кутамкка тата чăматан йăттарса кăларса янă хыççăн Захиб аппа çеç куççуль кăлармасăр чăтаймарĕ.

Çăмăл пулмарĕ Энвере Хусанта. Вĕренессе вăл аванах вĕренсе пычĕ-ха. Анчах Хусанта ашшĕ те, амăшĕ те çумра мар-çке-ха. Общежитире çăкăр сăмси касса паракан та, вĕри шӳрпе çиме сĕнекен те çук. Пĕтĕмпех хăвăн хатĕрлемелле. Институтра иккĕмĕш çул вĕреннĕ чухне Атăл тăрăхĕнчи республикăсемпе облаçсенче тырă начар пулчĕ, ĕç çыннине пиçиххине тата та туртарах çыхма тиврĕ. Баржăсене пушатса, вакунсене тиесе Энверĕн те чылаях тарламалла пулчĕ.

Геннадий УТКИН.

/Вĕçĕ пулать/.

Аслăлăх çыннисем

КАНĂÇА ПЁЛМЕН ФЕИЗОВ

/Вёçё. Пуçламăшё иртнё номерте/.

Çав çул институтра вăл Елчёк ăрăхёнче çуралса ўснё аспиранта Геннадий Волковпа çывăхланчё. «Чăваш тутарё, Шăнкăртамран», – тесе пёлтерчё хăй çинчен Энвер ентешёпе алă тытса паллашнă май. Хальхи вăхăтри çиннипе паллă этнопедагог Геннадий Никандрович Волков академик вăл тапхăра çапла аса илет: «Чи лайăх вёренсе пыракансен хушшинче унăн хушамачё çукчё, анчах та факультетра вăл чи паллă студентсен шутёнчеччё. Ыттисенчен никам пек те мар, хăй пек шухăшлама пултарнипе уйрăлса тăратчё, унăн каласăвёнче йăлăхтарса çитернё пёр шухăшлăх анчах та палăрмастчё».

1950 çул. Çёртме уйăхён вёçёнче Энвер Феизов институт пётерни çинчен диплом илчё. Малашне унăн ăçта ёçлемелли те паллă ёнтё: Хусан çывăхёнчи Арск хулинчи педагогика училищинче. Феизовăн кунта педагогика, психологи, логика вёрентмелле. Аван, апа уйăхёсем, чўк уйăхён пуçламăшё. Часах çёнё 1951 çул. Вёренекенсем Феизов ирттерекен уроксемпе кăмăллă: тимлё итлеççё, темăсенче хускатнă проблемăсене сўтсе явма хастар хутшăнаççё.

Чўк уйăхён иккёмёш çурринче Чăваш Енри Чкаловскинчи çар комиссариатёнчен Арскри педучилище дирекцине çыру килет: хёсмет йёркипе килёшўллён Энвер Зиатдинович Феизовăн район центрне çар комиссине тăма заскавлăн çитмелле.

Акă вăл каллех тăван вырăнсенче. Çар ретне тăма хатёр пулмалла-çке-ха. Тухтăрсем тёрёслеççё, комиссар калаçусем ирттерет. Çапла виçё эрнене яхăн вăхăт иртсе каять. Çурта пек яш каччă ўт-пў тёлёшёнчен кăлтăксăр та мар-мён. Арск хулинчи педагогика училищинче те логикăпа психологие урăх преподаватель вёрентме пикенет. Районти çут ёç пайё Энвер Зиатдиновича Чкаловскинчи вăтам шкул учителё туса хурать. Захиб аппашăн калама çук пысăк савăнăç: унăн юратнă ывăлё каллех килте, ăна валли вăл ялти маттур хёре те куçласа хунă ёнтё. Иккёшё пёр-пёрне килёштерсен туй тума та юрать. Зиатдин Феизович та ывăлё киле таврăннипе кăмăллă.

Энвер Зиатдиновичăн ашшёпе амăшён кăмăлне хуçас килмест, анчах ялта тёпленсе пурăнас шухăш та илёртмест-ха ăна. Вырăнти вăтам шкулта çулталăк ытла ёçленё хыççăн вăл Шупашкара тухса килет, Чăваш патшалăх педагогика институтне вырнаçать. Ёçё пысăк мар, малашлăх пысăк. Феизова педагогикăпа психологи кафедрин ассистентчё пулма уйăрса лартаççё, çак ёçре пёр ăстрăм тăрмашнă хыççăн вăл аслă преподаватель тивёçёсене пурнăçласа студентсене логикăпа философи вёрентме пуçлать.

«Нумай каласма юратмастчё, анчах та каласма тытăнсан итленёçемён итлес килетчё. Вăл мён калани пётёмпех философипе психологие тарăннăн пёлнине кăтартса паратчё», – аса илет Геннадий Волков академик.

Гурий Германов доцент ертсе пыракан педагогика кафедринче преподавательсен туслă коллективё чăмăртанать. Ушкăнра çамрăксем йышлă. Иксёлми вăйхăват, пысăк пёлў, малашлăх ёмётсем вёсене канмасăр ёçлеме хистенё. Ёçре тавлашасси, чăнлăх шыраса пёр-пёринпе тупăшасси вёсемшён çёнёлёх пулман.

«Кафедрăра ёç-пуç пёр майлă анчах пулса пыман. Хăш-пёр чухне тавлашаттăмăр, хирёçсе кайнисем те пулнă. Çак лару-тăрура Феизовпа иксёмёр, мёнле каласçё-ха, яланах пёр çуна çинчеччё. Çакă ахальтен пулман: мёншён тесен пирён чунсем тёлёнмелле çывăхчё, тёнче курăм нумай енчен пёрешкелччё», – тет çакăн пирки Геннадий Никандрович Волков.

Шупашкарта ёçлеме пикеннёренпе икё çул иртнё хыççăн Энвер Феизов авланчё. Çамрăк арăм, педагогика институтчён филологи факультетне пётерсе тухнăскер, Энверпе пёрле студентсене латин чёлхине вёрентрё. 1954 çулта вёсен хёр çуралчё, ăна Галия ят пачёç. Галия Энверовна кайран ашшё çулёпех кайрё. Ашшён çулё вара такăрах пулмарё. Çав çул çинче ăна пулăшакансем те, такăнтаракансем те тупăнсах пычёç. Студентсем туртăнни, хисеплени, лекцийёсене итлеме кёпёрин çўрени хăшёпёрне питё кёвёçтеретчё. Энвер Зиатдинович хăйён шухăшне тўрён калани, пуçлăхсене тайма пуç тума пёлменни, йăпăлтатма юратманни те аванах чăрмантарчё. Институтра ăна хирёçле пёчёк ушкăн чăмăртанни сисёнчё. 1960 çулта Энвер Зиатдинович Мускаври Ломоносов ячёллё университет аспирантуринчен вёренсе тухнăччё. Хирёçле ушкăн вёттён усал тума тăрăшнинчен хăтăлас тата ашшёпе амăшё умёнчи тивёçе пурнăçлас тёллевпе çав çулах Чкаловскине таврăнса 1962 çулччен вăтам шкул директорёнче ёçлерё.

Çемьерен уйрăм пурăнса тунсăхласа çитнёрен тата институтра лару-тăру хăйён еннелле çаврăннине туйса Энвер Зиатдинович Шупашкара таврăнчё, 1962 çулхи авăн уйăхёнче малтанхи ёçех пуçăнчё.

Малаллахи виçё çул кандидат диссертацине хатёрлесе тата хўтёлесе иртсе кайрё. Чылаях кăткăс, халиччен никамах та тёпчемен ыйтăва суйласа илчё Феизов диссертаци çырма. Философи, психологи тата медицина ыйтăвёсене халичченех тарăннăн тишкерни диссертанта нумай пулăшрё. Хусанта хўтёленчё, 1965 çулта философи наукисен кандидачё пулса тăчё.

Пурнăçён çак тапхăрёнче вăл этем шухăшне аякран пёлес тата гипноз тăвас енёпе хăйён ăстăнён тата пултарулăхён çёнё енёсене уçрё. Çак ёçе вăл асамçă пек мар, ăсчах пек туса пычё. Тёрлё ўсёмри халăх çине тухса ёçлемелле пулчё унăн. Сессисен вăхăтёнче куракансене гипноз вăрттăнлăхёсене уçса пачё, этем психикинче сайра-хутра анчах палăракан енсем пирки лайăх каласа ăнлантарчё.

Çăмăл мар пулчё ăна ку тапхăрта та. Пединститутра тин çеç йёркеленнё философи кафедрин доцентне лартрёç. «Пёлў» обществăн республикăри организацийё лекцисем вулама, гипноз сеансёсем ирттерме явăçтарчё. Отпуск вăхăтёнче Энвер Зиатдинович республикăри тата юнашар регионсенчи хуласенче, район центрёсенче, пысăк ялсенче лекцисем вуласа халăхпа тёл пулчё. Çынсем ăна итлеме яланах хатёрччё, хăй те ывăннине туймастчё. «Халăхпа тёл пулмалла тесен вăл таçта çитме те хатёрччё. Пёррехинче эпё унпа Атăл леш енчи торф кăларакан предприятире пултăм. Предприятин клубне çынсем çапса хёснё пек тулнă. Лекци вуласа, гипноз сеансё ирттерсе вăхăт виçё сехет майлах иртсе кайрё. Халăх саланасшăн мар. Энвер Зиатдинович уйрăм çынсен ыйтăвёсене хуравласа клубра тата тепёр сехет ытла тытăнса тăчё», – çырнă университетра тухса тăракан «Ульяновец» хаçатра Михаил Румянцев профессор.

Çапах та Феизовшăн студентсене вёрентесси тёп ёç шутланнă. Наука енчен илсен вăл ăс-тăнпа матери хушшинчи пёрремёшлёхпе иккёмёшлёхе унченхинччен те тарăнрах тёпчеме пуçлать, институтра тухса тăракан ăслăлăх кёнекисенче статьясем пичетлесе кăларать, монографисем çырать.

Иртнё ёмёрён утмăлмёш çулёсен вёçёнче Шупашкарта университет уçăлни вёрентўпе наука ёçёнче пысăк пулăм пулса тăчё. Феизов университета ёçлеме куçрё, кунта та вăл философи кафедрин доценчён тивёçёсене пурнăçласа пычё.

Этемён савăнăçё те, хуйхисуйхи те хăйёнпе пёрлех. Çитмёлмёш çулсен вёçёнче пёр вăхăтрах Энвер Зиатдинович ашшёне те, амăшне те çухатрё. Çуначё хуçăлнă пекех туйрё вăл хăйне. Ашшё те, амăшё те 85 çула çитнёччё ёнтё, чылай ватăччё. Пёр-пёрне юратса, хисеплесе пурăннăç вёсем. Килёштерсе пурăннă арăмёпе упăшки ватăлса çитсен пёр вăхăталла вилеççё тени тёрёсех çав. Инкек пёччен çўремест тенине те ахаль каламан. Нинель Хайрулловна та, Энвер Зиатдиновичăн савнă мăшăрё, чирлесе вăхăтсăр вилет тесе кам шутланă? Çухатусем, йывăр çухатусем... Феизов икё çула яхăн тăна кёреймесёр тенё пек пурăнчё. Лăш курмасăр ёçлени çеç çăлса хăварчё. Халăх хушшинче лекцисем, гипноз сеансёсем ирттересси чакнăçемён чакса пычё, Энвер Зиатдинович пуçёпех наукăна парăнчё.

Ёçри вырăншăн хыпса çунасси уншăн нихăçан та тёп тёллев пулман. Кирек ăçта ёçлесен те хăйён вырăнне тупасса вăл яланах шаннă. Мускаври коопераци институтчён Шупашкарти филиале ёçлеме куçсан та çаплах пулчё. Преподавательсем те, студентсем те ăна хăвăрт хăнăхрёç. Занятисем йёркеллё ирттрёç, тёпчев ёçёсем те ăнăçлă пулса пычёç.

Вăхăт иртнёçемён çухату суранё самаях пирчерё. Галия та ўссе çитёнчё, хёр пулчё, аслă шкултан вёренсе тухрё. Энвер Зиатдинович пёччен пурăнас темерё, сăнёпе чипер, ăсёпе çивёч, ăшă чун-чёреллё чăваш хёрёпе Зоя Георгиевнăпа пёрлешрё.

Э.Феизов тепёр хут университета куçрё, ăна философипе наука методологийён кафедрин пуçлăхне лартрёç. Çак вăхăт тёлне вăл философи наукисен докторён диссертацине хўтёленёччё ёнтё.

Пурнăç тёрлё пулăмпа пуян пулсан вăхăт та хăвăрт иртет. Унтанпа вун пилёк хутчен çуркунне йывăçсем симёс тумпа витёнчёç, вун пилёк хутчен хăйсем çинчи саралнă чатăра сирсе ывăтрёç. Энвер Зиатдиновичшăн пурнăç университетра та, килте те пёр вырăнта тăмарё. Феизов çине тăнипе тата Л.П.Кураков ректор пулăшнипе университетра философи наукипе кандидатсемпе докторсен диссертацине хўтёлемелли канаш уçăлчё. Унăн председателё пулма Э.З.Феизова çирёплетрёç. Вунă çул хушшинче 95 çын философи наукисен кандидачён диссертацине хўтёлерё, доктор диссертацине хўтёленисен йышё 18 çынна çитрё. Энвер Зиатдиновичăн хёрё Галия Энверовна Ахтямова, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийён ёçлекенскер, малтан кандидат диссертацине хўтёлерё, кайран философи наукисен докторё пулса тăчё. Халё вăл академире философи, истори тата право кафедрине ертсе пырать. Феизовăн мăнукё Дина Феликсовна та наука кандидачё. Вăл Шалти ёçсен министерствин аслă шкулён Шупашкарти филиалёнче вёрентет. Галия Энверовнăн кёçён ывăлё Денис пысăк шанчăк парать, тёпчев ёçне юратать, ăсчах пулас ёмётпе пурăнать.

Энвер Зиатдинович 55 çул хушши наукăра ёçлесе философи, психологи проблемисемпе 100 яхăн статья, 30 ытла кёнекепе брошюра çырса пичетлерё. Студентсем, аспирантсем, преподавательсем вёсемпе паян та усă кураççё. Ёмёрлёхех философи наукисен ылтăн фондне кёрсе юлмалли кёнекесем те пур унăн. Вёсенчен пёри «Мозг, физика и психика» кёнеке. Ку кёнеке Мускавра та, Шупашкарта та чылаях пысăк тиражпа пичетленсе тухнă. Унпа ют çёршывсенчи философсем те кăсăкланççё. Калама кăна канас: вăл ертсе пынипе 44-ăн кандидат диссертацийё, 7-ён доктор диссертацийё хўтёленё.

Университетра Э.З.Феизов ертсе пынипе «Чăваш халăх философийё» наука шкулё йёркеленчё. Пирён çёршывра пысăк ёçе пысăк хак параççё. Энвер Зиатдинович та Чăваш Республикин наукăн тава тивёçлё ёçченё, Халăха вёрентес ёç отличникё, темиçе хутчен те Чăваш АССР Верховнăй Совечён Президиумён Хисеп грамотине илме тивёç пулнă. Э.З.Феизов – Пётём тёнчери информаци академийён чăн членё.

Хальлёхе пурнăçа пётёмлетме вăхăт çитмен-ха – çапла шухăшлать ученăй. Кафедрăна ертсе пырас, наукăри шырава малалла тăсас, вёрентў меслечёсене лайăхлатас, кадрсем хатёрлес ёçсенче вăл унченхинчен те тимлёрех, хастартарах. Ыранхи куна Энвер Зиатдинович пысăк ёмётпе, çутă шанчăкпа, çивёч ăспа, çирёп вăйхалпа кётсе илет.

Геннадий УТКИН.